25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 СЕНТЯБРЬ 15 ЫТЛАРИКУН 215 (6150) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕпе Чăваш АССР Наркомземĕн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Ишлей МТС-ĕ тăрăх.

69. **7-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **Егоров** юлташ). Бригада тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне 111 процент тултарнă, 2.005 килограмм горючи перекетленĕ.

70. **10-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **А. М. Горшков** юлташ). Бригада тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне 104,7 процент тултарнă, 1.133 килограмм горючи перекетленĕ.

71. **Тракторист Е. Г. Григорьев.** Вăл НАТИ тракторпа ĕçлесе çулталăк планне 116,5 процент тултарнă, 1.143 килограмм горючи перекетленĕ.

72. **Трактористка Клавдия Ефимовна Ефимова.** Вăл СХТЗ тракторпа ĕçлесе çулталăк планне 189 процент тултарнă, 613 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

73. **Трактористка Мария Васильевна Толстова.** Вăл У—2 тракторпа ĕçлесе çулталăк планне 215 процент тултарнă, 518 килограмм горючи перекетленĕ.

74. **Тракторист Р. З. Сергеев.** Вăл У—2 тракторпа ĕçлесе çулталăк планне 160 процент тултарнă, 460 килограмм горючи перекетленĕ.

75. **Тракторист И. А. Андрианов.** Вăл СХТЗ тракторпа ĕçлесе плана 156 процент тултарнă. 200 килограмм горючи перекетленĕ.

76. **Тракторист П. И. Иванов.** Вăл СХТЗ тракторпа ĕçлесе плана 149 процент тултарнă, 590 килограмм горючи перекетленĕ.

77. **Тракторист Спиридон Васильевич Васильев.** Вăл НАТИ тракторпа ĕçлесе çулталăк планне 134 процент тултарнă, 981 килограмм горючи перекетленĕ.

78. **Комбайнер М. Е. Родионов.** Вăл «Коммунар» комбайнпа план тăрăх 80 гектар вырас вырăнне 160 гектар вырса пуçтарнă, 134 килограмм горючи перекетленĕ.

79. **Комбайнер М. Д. Данилов.** Вăл «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе планпа 80 гектар вырас вырăнне 140 гектар вырса пуçтарнă, 70 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Тырпулшăн кĕрешни—çĕнтерӳшĕн кĕрешни

Республикăри колхозсем тырпулсене вырса пĕтерчĕç, халĕ кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсем хĕрӳллĕн пулса пыраççĕ. Кунпа пĕрлех техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсене пухса кĕртесси тата кĕрхи çĕртме тăвасси те колхозсем умĕнче тăракан чи кирлĕ ĕçсем пулса тăраççĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илес тесен, пирĕн ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене хăвăрт тата пысăк пахалăхпа вĕçлесе çитерес пулать.

Чăваш АССР Наркомземĕн сводки кăтартса панă тăрăх, капан тăвассипе авăн çапасси пирĕн республикăра халĕ те çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пулса пыраççĕ. Кĕлтесене капана хывмалли плана республика сентябрĕн 10-мĕш тĕлне пĕтĕмпе те 75 процент кăна тултарнă, тырпулăн 41 процентне кăна çапса илнĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Первомайски, Елчĕк, Тăвай районĕсем юлса пыраççĕ. Вĕсем пĕтĕм республикăна каялла туртаççĕ, малтисемпе танлашас тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлемеççĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçĕн хăвăртлăхĕсене пирĕн чылай ӳстермелле. Йĕпе-сапаллă сивĕ кунсем пуçланиччен пахча-çимĕçсене пухса илмелле, тĕштырăсене çапса пуçтармалла. Çакна вара вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхсемпе ĕçлесен кăна пурнăçа кĕртме пулать.

Анчах ĕçĕн пахалăхĕ çинчен те пĕр минутлăха та манма юрамасть. Уйрăмах тырпул тăккаланнине хирĕç вирлĕн кĕрешмелле. Кашни пучахах, кашни пĕрчĕне пухса кĕртме тăрăшмалла. Çакна вара хăшпĕр колхоз председателĕсемпе чылай колхозниксем час-часах манса каяççĕ, тырпула нумай тăккаласа хăвараççĕ. Шупашкар районĕнчи «Молния» колхозра çĕмел вырăнĕсенче 175-шер пучах тăкса хăвараççĕ. «XI лет Октября» колхозра пĕр çĕмел вырăнĕнче 410 пучах тăкса хăварнă. Çакăн пек тĕслĕхсем чылаях тĕл пулаççĕ. Вĕсем ĕçре пахалăх çуккине, колхозсенче тырпулăн кашни пучахĕшĕн кĕрешни çуккине кăтартса параççĕ.

Тырпулшăн кĕрешни халĕ çĕнтерӳшĕн кĕрешни пулать. Çавăнпа та пучахсене пухас, тăккаланчăксемпе кĕрешес ĕç питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ĕç чылай районсенче лайăх пулса пырать. Машинăсем çумне зерноуловительсем çакса, пучах пухас ĕçе лайăх организацилесе, колхозсем пирĕн уйхирсен тухăçлăхне ӳстереççĕ. Çапла майпа Елчĕк районĕнчи колхозсем 1.4186 гектар çинче 1.148 центнер, Шăхасан районĕнчи колхозсем 7.085 гектар çинче 1.133 центнер пучах пухнă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, республикăра 78.984 гектар çинче 5.237 центнер пучах пухнă. Çак тырă вăл колхозсен тупăшне, государство тупăшне ӳстерет, тăшмана хирĕç кĕрешме пулăшать. Çавăнпа та пучах пухас ĕçе хакламан районсемпе колхозсем пысăк йăнăш тăваççĕ. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем мĕнпурĕ те 22 центнер кăна пучах пухнă, Тăвай районĕнче—38 центнер, Ишлей районĕнче 49 центнер, Красноармейски районра 51 центнер кăна пухнă. Сĕнтĕрвăрри районĕнче вара пучах пухас ĕçе ячĕшĕн кăна организациленĕ. Çавăнпа та унта 4.223 гектар çинчен те 56 центнер çеç пучах пухса илнĕ.

Тăккаланчăксем тырă вырнă чухне çеç мар, кĕлте кӳнĕ тата авăн çапнă чухне те пулма пултараççĕ. Тырпул сахалтарах тăкăнса юлтăр, колхоз нумайрах тырпул пухса илтĕр тесен, пур ĕçсене те пысăк пахалăхпа, типтерлĕн тума тăрăшас пулать, тăкăнса юлнă тырра çийĕнчех пуçтарса илес пулать.

Кунпа пĕрлех, пухса илнĕ тырра сыхласа усрассине лайăх организацилемелле. Çак ĕçе вара хăшпĕр чухне тивĕçлипе хакламанни пулкалать-ха. Шăмăршă районĕнчи «Труженик» колхозра комбайнпа авăн çапнă чухне итем çинче пушар тухнă пулнă, çав вăхăтра икĕ лав кĕлте çунса кайнă. Çакăн пек инкексем ан пулччăр тесен, пушартан сыхланас ĕçе тивĕçлипе туса пымалла. Пухса илнĕ тырпула хунă итемсене, амбарсене сыхлама шанчăклă колхозниксене хурал тăратмалла.

Тырпулсене пухса кĕнĕ çĕрте колхозри учет ĕçĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Комбайнпа е молотилкăпа çапса илнĕ кашни килограмм тырă учетра пулмалла. Колхозăн пĕр килограмм тырри те çухалмалла мар. Миçе килограмм çапса илни, миçе килограмм амбара хывни, колхозăн учет кĕнекисенче кашни кунах палăрса тămалла. Çапла тусан çеç колхозăн хаклă пурлăхне—ылттăн тырпула тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа усрама пулать. Учет ĕçĕпе колхоз председателĕсен хăйсен куллен интересленмелле, ертсе пымалла.

Çапăçу хирĕсенче вăрçă пысăк хĕрӳлĕхпе пулса пырать. Пирĕн тăвансем тăшмана хирĕç пĕтĕм вăя хурса кĕрешеççĕ. Вĕсене çителĕклĕ апат-çимĕç, тырпул парса тăрасси—тыл умĕнче, пирĕн умра тăракан пысăк задача. Эпир те пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе тырпул ытларах туса илсен, фронтри тăвансем пире тав тăвĕç, эпир вĕсене çĕнтерӳ тума пулăшăпăр, хамăрăн ирĕклĕ пурнăçа сыхласа хăварăпăр. Çакăншăн пирĕн яланах тăрăшас пулать.

Сентябрĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсем Бухарест, Плоешти, Кенигсберг хулисем çине бомбăсем пăрахнă

Сентябрĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ Бухарест, Плоешти, Кенигсберг хулисенчи, çавăн пекех тата Румынин ытти хăшпĕр хулисенчи çар тата çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула Бухарестра 33 çĕрте пушар тухнă, пушарсемпе пĕрле вăйлă взрывсем пулнă. Казармăсемпе арсеналăн тата Румыни çар министерствин районĕнче 5 тĕлте вăйлă взрывсем пулнине палăртнă.

Плоештире 5 çĕрте вăйлă пушарсем тухнă. Плоешти хули çунать.

Кенигсбергра 8 çĕрте пушар тухнă, пушарсемпе пĕрле взрывсем пулнă.

Пирĕн самолтсем, пĕр самолетсăр пуçне, пурте хăйсен базисене таврăннă.

Авăна кунĕн-çĕрĕн çапмалла. Пĕр молотилкăна та пушă лартмалла мар. Уяр çанталăкăн кашни минутипе усă курмалла.

Тырпула ăнăçлăн пуçтарса кĕртрĕмĕр

Тăван çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра пирĕн, тылра ĕçлекенсен, кашниннех пĕтĕм вăй-хала фронта пулăшас ĕçе хумалла. Пирĕн задача—çĕршыва тырпул, аш-какай тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене çителĕклĕ таран парасси пулса тăрать.

Пирĕн колхоз членĕсем çакна лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем хăйсен мĕнпур пултарулăхне, мĕнпур вăйне усăллă ĕçе параççĕ. Эпир фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх хушшинче уйри мĕнпур тырпула, вăл шутра пăрçа йышши тырăсене те, пĕтĕмпех вырса пуçтарса капана хыврăмăр. Çак вăхăтрах кĕрак кине вĕçлерĕмĕр, ыраша 70 процент, пăрçана 100 проценчĕпех тата 20 процент сĕлĕ çапрăмăр, хальхи вăхăтра эпир çĕрулми кăларас, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене туса пыратпăр. Шанса тăма пулать: ку ĕçсене те эпир ăнăçлăнах вĕçлĕпĕр. Уборкăри ĕçсем ăнăçлă пулса пыни пĕтĕмпех колхозниксем хастарлăн ĕçлениче. Вĕсем ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Чылайĕшĕсем нормăсене куллен ирттерсе тултарса пыраççĕ. Тырă вырнă чухне, акă, Екатерина Вушникова, Екатерина Ефиторова, Варвара Удиванова колхозницăсем, кашни кун ĕçе тул çутăличчен тухса тĕттĕм пулаччен ĕçлесе, нормăсене 150 процент таран тултарса пычĕç. Норма тăрăх 300 кĕлте çыхмалла пулнă пулсан, вĕсем 400—450-шар кĕлте çыхса пычĕç. Вера Удиванова, Варвара Ефиторова тата Евдокия Удиванова колхозницăсем кĕреплеллĕ çавасемпе куллен 0,45—0,50 гектар çулса пынă.

Тырпула пуçтарса кĕртес ĕçе ватă колхозниксемпе шкул ачисем те активлăн хутшăнчĕç. 62 çулхи Роман Кадыков колхозник, акă, кăнтăрла уйра е урăх çĕрте ĕçлетчĕ, каçхине уйăх çутипе улăх уттине капана хыватчĕ. Пуçламĕш шкулта вĕренекенсем 6 лав пучах пухрĕç т. ыт. те.

Пирĕн колхозниксем хушшинче агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ. Николай Ефиторов, Николай Андрюшкин, Павел Отнюков агитаторсем куллен уйхире тухса колхозниксем хушшинче калаçусем ирттерчĕç, хаçатсем çинчи статьясене вуласа пачĕç. Вĕсен вăйĕпех кашни бригадăра 12-шер номер боевой листоксем кăларнă.

Пирĕн умра халь пуçтарса кĕртнĕ тырпула çапса пĕтерсе, çĕрулми, пахча-çимĕçсене кăларса типтерлес, çĕртме тăвас ĕçе вĕçлес тата государство умĕнчи обязательствăсене срокченех парса татас задачăсем тăраççĕ. Сентябрĕн 11-мĕш тĕлне эпир тырă памалли çулталăкри плана 74 процент тултартăмăр, пахча-çимĕçсене пĕтĕмпех парса татрăмăр. Ытти ĕçсене те çитес вăхăтра вĕçлессишĕн эпир малашне тата ытларах тăрăшса ĕçлеме пулатпăр.

А. КИРИЛЛОВ,
Çĕмĕрле районĕнчи «Молодая сила» колхозăн председателĕ.

КАЯ ЮЛМА СĂЛТАВ ÇУК

ЕТĔРНЕ, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Чылай колхозсем кĕрхи тырăсене вырма пуçланă хыççăнах государствăна обязательство йĕркипе тырă пама тытăнчĕç. Буденный ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Наполивцев юлташ) государствăна 119 центнер тырă парса плана пурнăçларĕ. Çавнашкалах «Парижская Коммуна», «Правда» тата Тельман ячĕпе тăракан колхозсем те государствăна срокченех тырă парса татнă.

Районĕпе илсен, государствăна тырă тăратассине колхозсем 60,4 процент пурнăçларĕç пулин те, МТС ĕçлесе панăшăн натуроплата парасси начар пулса пырать. Ку тĕлĕшпе район плана 13 процент çеç пурнăçларĕ. Уйрăмăнах «Борец», «Ильич» тата ытти колхозсем питĕ япăх ĕçлеççĕ. «Ильич» колхоз натуроплата парас плана нимĕн чухлĕ те пурнăçламан.

И. ЛЬВОВ.

Улăх утине иккĕмĕш хут çулаççĕ

КУКЕÇ, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн апат-çимĕç базине вăйлатас тĕлĕшпе районри хăшпĕр колхозсем хăйсен улăхĕсенче утта иккĕмĕш хут ӳстерсе çулса пухма тăрăшаççĕ. Шуркка ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кăçал утă çулса илнĕ хыççăн курăка татах тепĕр хут ӳстерме 15 гектар уйăрса хăварнă. Ытти вырăнсенче кĕтӳсем çӳренĕ пулсан, вăл çарансем çинче çуллахи вăхăтра выльăхсене пачах çӳретмен.

Халĕ ĕнтĕ уйăрса хăварнă çарансем çинче иккĕмĕш хут çулмалăх курăк ӳснĕ. Колхоз халĕ вăл вырăнсене иккĕмĕш хут çулма тытăнчĕ. Малтан шутласа илнĕ тăрăх, кашни гектар çаран çинчен колхоз татах 25-шер центнер утă пухса илет.

Н. Н.

ВКП(б) Обкомĕнче

Кĕлтесене капана хывас, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсем Советски районра мĕнле пыни çинчен ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак кунсенче пăхса тухрĕ. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Советски районри колхозсенче кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсем питех те çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Сентябрĕн 10-мĕш тĕлне кĕрхипе çурхи тĕштырăсене район пĕтĕмпе те 66,5 процент кăна капана хывнă, 27,8 процент çеç авăн çапса пуçтарнă.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре район çакăн пек тӳсме çук кая юлса пыни акă мĕнрен килнĕ: ВКП(б) Советски райкомĕпе райисполком колхозсене начар ертсе пыраççĕ, çавăнпа кунта СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпулсене вырса пĕтернĕ хыççăн вунă кунран кая юлмасăр кĕлтесене капана хывса çитерме хушса хăварчĕç, пучахсене пухас тата комбайнсемпе çапса илнĕ хыççăн юлнă улăма капана хывас ĕçе вăхăтра организацилеме хушрĕç. Анчах ВКП(б) Советски райкомĕпе райисполком çак кăтартусене пурнăçа кĕртмен. ВКП(б) райкомĕ туртăм вăйĕ çителĕксĕр тесе пĕлтерет, анчах çакăн пек фактсене курмасть: нумай колхозсенче лашасене кирлĕ пек ĕçлеттермеççĕ, вĕсенчен пĕр пайĕпе пачах та усă курмаççĕ. Çапла, сăмахран, Уртавăш колхозĕнче виçĕ лаша темиçе кун хушши пĕр ĕçсĕр тăнă. Нагоркинăри колхозра вара 5 лаша пилĕк кун хушши ĕçсĕр тăнă. Çакăн пек фактсем ытти колхозсенче те пур. Районра кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывмаççĕ, уйхирте итемсем туса капана хывас ĕçе организацилемен, кĕлтесене инçетрен яла турттарса вăхăта ирттереççĕ. Çаксем пурте кĕлтесене капана хывас ĕçе вăраха ячĕç, çавна пула пысăк тăкаксем пулас тата тырпулăн пĕр пайĕ пăсăлса пĕтес хăрушлăх патне илсе çитерчĕç.

Уборка ĕçĕсем пуçланнă тĕле молотилкăсене пурне та юсамалли çинчен тырă вырма пуçланă хыççăн пилĕк кунран авăн çапма тытăнмалли çинчен, молотилкăсене талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлеттермелли çинчен СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) кăтартса панисене парти райкомĕпе райисполком пурнăçа кĕртмен. Колхозсенчи лашапа ĕçлемелли молотилкăсене чылайĕшне халĕ те юсаса ĕçе яман, итемсенче ĕçе начар организациленĕ, хăшпĕр колхозсен руководителĕсем тĕрлĕ ĕçсене черетпе туса пыма пăхаççĕ, кĕлтесене капана хывас ĕç пĕтессе кĕтсе, тырпула массăллăн çапса пуçтарма тăхтаса тăраççĕ.

Колхозсенче тырпул тăккалланнине хирĕç кĕрешме кирли çинчен ВКП(б) Советски райкомне парти Обкомĕ хытă асăрхаттарнă пулин те, нумай колхозсенче тырпула тăккалани тĕл пулать. Кĕлтесене капана хывнă хыççăн пучахсене пухса илес ĕçе организацилемен, хăшпĕр колхозсенче тасатса хатĕрлемен итемсем çинех капан туса лартаççĕ. Авăн çапнă хыççăн улăмпа арпана колхоз председателĕсем тĕрĕслесе йышăнмаççĕ, çавăнпа та авăн çапнă вăхăтра тырпул питех те нумай тăккаланса пĕтет. Çапла, сăмахран, Степан Разин ячĕпе тăракан, «Радио», «Новая жизнь», Володарский ячĕпе тăракан колхозсенче тулăпа пăрçа улăмĕсене тепĕр хут çапма тивет. Хăшпĕр колхозсенче çапса илнĕ тырра итем çинчен турттарса каймасăр усраççĕ, виçсе хăвармасăрах çĕрле те итем çинчех ыртараççĕ.

Райкомпа райисполком колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе начар туса пыраççĕ, ĕçе организацилессипе интересленмеççĕ. Çакна май, нумай колхозсенче социализмлă ăмăртăва сарса яман, капан тунă çĕрте сдельщина тăрăх ĕçлессине организацилемен, кохозниксен кашни кунхи ĕçне уйрăмăн виçсе йышăнмаççĕ. Нумай колхозсен председателĕсем бригадирсене ыран тумалли ĕçсем пирки нарядсем памаççĕ. Хăшпĕр колхозсенче колхозниксем ĕçе тухнине кашни кун шута илсе пыни çук. Çавна пула ĕç дисциплини начар, колхозниксем чылайĕшĕ колхозра ĕçлеме тухмаççĕ, хăйсен кил вырăнĕнчи участоксенче ĕçлеççĕ. Уборка вăхăтĕнче колхозсенче организациленĕ яслĕсемпе площадкăсене хальхи вăхăтра хупнă, çавăн пирки кĕлтесене капана хывнă тата авăн çапнă çĕрте ĕçлекен колхозницăсен хăйсен ачисене хире илсе тухма тивет.

Капан тăвас тата авăн çапас ĕçсене начар туса пынăшăн, тырпул тăккаланнине хирĕç кĕрешменшĕн ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Советски райком секретарьне Никитин юлташа асăрхаттарса хăварчĕ. ВКП(б) райкомне çак решенире кăтартнă çитменлĕхсене халех пĕтерме тата капан тăвассипе авăн çапас ĕçсене ВКП(б) Обкомĕпе Совнарком палăртнă срокра вĕçлес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Советски райкомĕпе райисполкома колхозсенче кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывас ĕçе организацилеме, колхозсенчи пур молотилкăсене те халех юсаса çитерсе, вĕсемпе талăкĕпех авăн çапнă çĕрте усă курма, авăн çапас тата государствăна тырă парас графиксене пур колхозсем те пурнăçламалла тума хушса хăварчĕ. Тĕштырă культурисене çапса пуçтарнипе пĕрлех, нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăхĕсене çапса илессине те халех организацилемелле.

Çӳлте асăннă çитменлĕхсене пĕтерсе, ВКП(б) Советски райкомĕпе райисполкомăн колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе куллен туса пымалла, социализмлă ăмăртăва сарса ярса, колхозниксене уборка ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлеме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли заданисене срокчен пурнăçа кĕртме мобилизацилемелле.

Хăмла татас ĕçе васкатмалла

ОКТЯБРЬСКОЕ. (**Телефонпа**). Кăçал нумай колхозсенче хăмла вăйлă пулчĕ. Хăмла хăвăрт пухса кĕртнине юратать. Çавăнпа та хăмлана халех, çак кунсенчех татса пĕтерсе пухса кĕртмелле.

Хăмлана татса пынă май сушилкăсенче тата хĕвел çинче типĕтессине кая хăвармалла мар. Чăваш АССР Совнаркомĕ çак тĕлĕшпе августăн 28-мĕшĕнче йышăннă хăйĕн постановленийĕнче хăмлана сентябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр пуçтарса кĕртме çирĕппĕн кăтартса пачĕ.

Анчах та районри чылай колхозсем çавна шута илмеççĕ. Вăрман Кăпкари Винокуров, Çичĕ Пӳртри Чапаев ячĕпе тăракан, Емпӳртри «Память Ленина», Шĕнерпуçĕнчи Маяковский ячĕпе тăракан колхозсенче сушилкăсем валли вутă та хатĕрлемен. Çавăн пекех Тупăй Есмĕлти «Красная Чувашия» колхозра та хăмла типĕтмелли сушилка начар ĕçлет. Хăмла типĕтмелли сушилка кулленех 20 центнер хăмла типĕтме пултарать пулсан та, хăмла татакансем начар ĕçленĕ пирки сушилкăна кунсерен 6—7 центнер кăна хăмла кĕрет.

Çитменлĕхсене халех пĕтерес тесен, Чăваш АССР Совнаркомĕ кăтартса панисене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пымалла. Хăмла татас ĕçе шкул ачисене явăçтармалла.

ФЕДОРОВ,
РСФСР Наркомпищепромĕн Ресхмель агропроизводстви отделĕн начальникĕ.

Ватă стахановецсем

КАЛИНИНО. (**Телефонпа**). Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхоз уйри тырпулсене пуçтарса кĕртес тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартать. Паянхи кун тĕлне колхоз 277 гектар çинчи тырăсене кӳнĕ, вăл 80 процент пулать.

Колхоз çак кунсенче хăйĕн ĕçне темиçе хут лайăхлатрĕ. Государствăна 250 центнер тырă, 150 центнер çĕрулми тата ытти пахча-çимĕçсем пачĕ. Колхозниксем 18 гектар çинчи кантăра кĕске вăхăт хушшинче татса типтерлерĕç.

Кĕлте кӳнĕ çĕрте ватă колхозниксем пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Кузьма Афанасьевăн 4 ывăлĕ отечественнăй вăрçă фронтĕнче совет ĕçхалăхĕн ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн фашистла ирсĕрсене хирĕç çапăçаççĕ. Вăл хăй те хăйĕн тăван ывăлĕсенчен юлмасть. Колхозра стахановла ĕçлесе, нормăна 150—160-шар процент тултарать. Норма тăрăх кашни çынăн кунне 30 урапа кĕлтене капана хывмалла пулсан, Афанасьев колхозник 50 урапа хывать. Çавăн пекех колхозри чи ватă колхозниксем те вăйлă ĕçлеççĕ. И. Яковлев колхозник 71 çула çитнĕ. Анчах та вăл ĕçлес тĕлĕшпе çамрăксенчен пĕрре те кая юлмасть, кунне 30 урапа кĕлтене капана хывас вырăнне 65—80 урапа хывса, нормăна ик-виçĕ хут ирттерсе тултарать.

Г. МАТВЕЕВ.

Шкул ачисем пучах пухаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Имбюртри пуçламĕш шкулта вĕренекен ачасем çуллахи каникул вăхăтĕнче колхоз ĕçне активлăн хутшăннă. Халĕ те, уроксем пĕтнĕ хыççăн, вĕсем кулленех колхозăн уйĕсене пучах пухма тухаççĕ. Çак иртнĕ 6 кун хушшинче пирĕн шкулта вĕренекен ачасем 35 гектар çинче вырнă чухне тăккаланса юлнă пучахсене пуçтарчĕç. Пучах пухма кулленех 80-шар ача тухать.

К. ТЕРЕНТЬЕВА.

Государствăна тырă тата çĕрулми пачĕç

ВĂРМАР. (**Телефонпа**). Комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникне районри 40 колхоз хутшăннă. Вĕсем 349 лавпа 132 тонна тырă хатĕрлев пунктне леçсе панă, вăл шутран 5 тонна тырра Хĕрлĕ Çар фондне хывнă.

Воскреснике 251 комсомолец хутшăннă. Комсомолăн Кивĕ Вăрмарти «Большевик» колхозри пуçламĕш организацин секретарĕ Семенов юлташ государствăна тырă парас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ку колхозра лавсем станцине икĕ хутчен кайса тырă леçсе панă.

Чупайри «Дружба» колхозăн кĕрлĕ обозне комсомолăн пуçламĕш организацин секретарĕ Тимофеева юлташ ертсе пынă. Хоруйри «Пионер» колхозра—комсомол организацин секретарĕ Смелова, Тикалари «Большевик» колхозра — Шапеева, Орнарти «Победитель» колхозра — Иванова юлташсем воскреснике лайăх организацилесе ирттерчĕç.

Воскресник кунĕнче районри 12 колхоз государствăна çĕрулми пачĕç. 49 лавпа (хăшпĕр лавсем иккĕр кутланă) 34 тонна çĕрулми Кавалти крахмал заводне пырса панă.

И. ЗАЛЕВСКИЙ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

ВОСКРЕСНИК ПУЛĂШРĔ

КУКЕÇ, сентябрĕн 14-мĕш. (**Телефонпа**). Район государствăна тырпул тăратмалли графика кашни пилĕккунлăхран тултарса пырать. Сентябрĕн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче график тăрăх районри колхозсен государствăна 245 тонна тырă памалла пулнă пулсан, вĕсем 263 тонна панă. Халĕ, сентябрĕн 10-мĕшĕпе 15-мĕшĕсенче 345 тонна памалла. Паянхи кун тĕлне 198 тонна панă та ĕнтĕ.

Государствăна тырă тăратмалли графика пурнăçа кĕртес ĕçре комсомолецсем туса ирттернĕ воскресниксем нумай пулăшрĕç. Сентябрĕн 13-мĕшĕнче пулса иртнĕ воскресникре государствăна Чемпекри колхозран 31 лав, «Майăн 1-мĕшĕ» колхозран 21 лав, Лапсар ялсоветĕнчи колхозсенчен 39 лав тырă леçнĕ. Çак кун районри колхозсем государствăна 75 тонна тырă панă.

«Правда», «Строитель», «Малалла», «Красный флот», «Осоавиахим» колхозсем государствăна тырă парса татнă.

Т. ЛОГИНОВ.

Молотилка пĕр чарăнусăр ĕçлерĕ

ИЕПРЕÇ. (**Телефонпа**). «Правда» колхоз кĕрхи тырăсене уйхиртен кĕртсе пĕтĕмĕшпех çапса пĕтерчĕ. Колхозниксем стахановла ĕçленине пула машинно-тракторнăй станцин молотилки пĕр чарăнусăр ĕçлерĕ, куллен 13—14 тонна тырă çапрĕ.

Районри колхозсем уйхир ĕçĕсене вĕçлеççĕ. Колхозсем кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç. Пур колхозсем те тенĕ пекех планран ирттерсе чылай тырпул акса хăварнă. «Коминтерн» колхоз кĕр-аки планне 120 процент, Киров, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем 102—105 процент, «Орел» колхоз 154 процент тултарнă. Акнă тырă лайăх шăтса тухнă

Д. МИХАЙЛОВ.

Государствăна аш-какай, çăмарта параççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («**Чăваш Коммуни**» **корр.**). Районри колхозсем çĕршыва аш-какай, сĕт-çу, çăмарта ытларах та ытларах пама тăрăшаççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем государство умĕнчи обязательствăсене ытлашшипех пурнăçларĕç.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз уйри тырпула районра пуриннчен малтан пухса кĕртсе çапса пĕтерчĕ. Çавăнпа пĕрлех колхоз государство умĕнчи парăмсене те пурне те парса татрĕ. Аш-какай парас тĕлĕшпе çулталăк планне 105 процент, çăмарта памалли плана 100 процент ытла, çăм памалли плана 107,7 процент тултарчĕ.

Питушкинăри «Вперед» колхозăн план тăрăх кăçал 2.233 штука çăмарта памалла. Ку таранччен вăл 2.309 штука панă. Аш-какай памалли обязательствăна та вăл 127 процент тултарнă.

Кăмашари «Волга», Улхашри «Искра», «Подборное», «1-ое Мая» тата ытти колхозсем те государствăна планран ирттерсе темиçешер пăт аш-какай, сĕт-çу, çăмарта пачĕç. Аш-какай памалли обязательствăна «Волга» колхоз 186 процент, «Искра» колхоз 108 процент тултарчĕç.

Х. ЛИСИН

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинградран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, Моздок районĕнче, çавăн пекех тата фронтăн Волхов участокĕнчи Синявино районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче пăлла улшăнусемех пулман.

Иртнĕ эрнере, сентябрĕн 6-мĕшĕпе 12-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, аэродромсенче тата зенитнăй артиллери пеннипе, противникăн 415 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çав вăхăт хушшинче 281 самолет пĕтнĕ.

Балтика тинĕсĕнче пирĕн карапсем нимĕçсен 10.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 15 танкĕпе бронемашинине çитн, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 80 автомашинине çити, боеприпассем тиенĕ 30 лавне, горючи тултарнă 8 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 6 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пынă. Нимĕçсем темиçе хут атакăланă. Противникăн пур атакисене те сирсе янă. Н-ски подразделенин участокĕнче кăна нимĕçсен 6 танкне тата 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра артиллерипе бронебойщиксем нимĕçсен 2 танкне, пехота турттарса пыракан 9 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата румынсен пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем оборонăра тăрса хĕрӳллĕн çапăçнă.

Противник хăйĕн резервĕсене илсе пырса тата авиацин пысăк вăйĕсем пулăшса пынипе пирĕн позицисене тăтăшах атакăлать. Пĕр участокра вăл хаяррăн çапăçнă хыççăн малалла куçма тата халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илме пултарнă. Çав çапăçура пирĕн войскăсем тăшманăн пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 40 танкне çити персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата автоматчиксем ларса пыракан 24 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем тата пехотинецсем нимĕçсен 60 танкĕн атакине сирсе янă, противника пысăк çухатусем тӳстернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем противникпа хаяррăн çапăçса нимĕçсен 12 танкне пĕтерсе тăкнă тата гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Воронежран кăнтăртарахра, Дон шывĕн хĕвеланăç енчи çыранĕнче, противник пехотăн пĕр дивизине тата çĕр танка çити вăйпа наступлени тунă. Пирĕн позицисене хирĕç тунă ăнăçусăр атакăсенче гитлеровецсен 2 пин салтака офицера çити вилнĕ е аманнă. Унсăр пуçне, пирĕн боецсем 9 танк, орудисен 3 батарейине тата минометсен 6 батарейине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 4 самолетне персе ӳкернĕ. Тепĕр участокра пирĕн часть шыв урлă каçнă та, минăсем хурса тухнă икĕ вырăн урлă каçса, халăх пурăнакан пĕр пунктăн хĕрринче çапăçать. Противник çав участока резервсем илсе пыма хăтланнă. Пирĕн артиллери нимĕçсен пехоти ларса пыракан 60 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн разведка тăвакан темиçе отряд тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă та ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ. Нимĕçсен 250 салтакĕпе офицерне çитн вĕлернĕ. 2 оруди, 2 миномет пĕтерсе тăкнă тата 21 дзот çĕмĕрнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур.

* * *

Румынсен 2-мĕш горнострелковăй дивизийĕнчи 10-мĕш батальонĕн 2-мĕш ротинчи салтак Георге Кокош çапла каласа панă: «Пирĕн дивизие пырса çитсенех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Вăл малтанхи кунсенчех 1.320 çын çухатрĕ. Часах пире шыв урлă каçса вырăссене çав юханшывăн тепĕр енчи çыранĕнчен хĕссе кăларма хушрĕç. Эпир шыва кĕрсенех пире вырăссем вăйлăн пеме тытăнчĕç. Нумай салтака вĕлерчĕç тата амантрĕç. Чĕрĕ тăрса юлнисем тарса саланчĕç. Румыни çарĕнче салтаксене хĕнесси анлăн сарăлнă. Мана пушăпа темиçе хутчен те хĕненĕ. Çартан таракансен хисепĕ кунсеренех ӳссе пырать. Пĕр кун хушшинче 3-мĕш ротăран 6 салтак, 1-мĕш ротăран 31 салтак тарса кайнă».

* * *

Тытса илнĕ документсем хушшинче нимĕç çарĕн верховнăй командованийĕн «çар çыннисен багажĕсене тĕрĕслесси» текен секретлă приказа тупнă. Çак приказра çапла каланă: «Юлашки вăхăтра чемодансене час çурăлса кайман снарядсем хурса саботажлă ĕçсем тунă пирки çулйĕр министерстви пассажирсен багажĕсене тĕрĕслеме, çавăн пек саботаж тумалли орудисене шырама хушнă». «Хĕçпăшаллă вăйсен верховнăй командованийĕн ютçĕршыв управленийĕн разведка отделĕ панă удостоверени пур çынсен» багажĕсене çеç тĕрĕслемелле мар. Малта кăтартнă документ Германире диверсиллĕ тата саботажлă ĕçсем анлăн сарăлнине кăтартать.

* * *

Калинин облаçĕнчи халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Брюхачево ялĕнчи çынсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен каласа кăтартнă. Гитлеровецсем пур хресченсене те çаратса тухнă. Вĕсем кашни кун килсем тăрăх çӳресе, унта мĕн тупнине пурне те илсе кайнă. Совет войскисем пыра-пыра çапнипе ялтан чакса кайнă чухне нимĕçсем П. Богданов, Е. Седов колхозниксене тата нумай ытти çынсене персе вĕлернĕ.

Сентябрĕн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинградран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, Моздок районĕнче, çавăн пекех тата фронтăн Волхов участокĕнчи Синявино районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче пăлла улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем оборонăра тăрса противникăн пехотипе тата танкĕсемпе çапăçнă. Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕ хӳтĕлекен рубежа гитлеровецсен 20 танкĕ тата икĕ батальона çити пехоти атакăланă. Артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ, ыттисем каялла çавăрăнса кайнă. Противникăн танксен хӳтĕлĕхĕсĕр тăрса юлнă пехотине пирĕн боецсем атакăланă та аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине çити выртса юлнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хĕрӳллĕ çапăçусем пынă. Пĕр участокра противник пирĕн войскăсем тăракан вырăна татса кĕме пултарнă. Н-ски танковăй подразделени нимĕçсене атакăланă та хăйĕн позицийĕсене каялла тытса илнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен 5 танкне, броньăланă 11 машинине тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. çĕмĕрнĕ те халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче противникăн 100 салтакĕпе офицерне çити вилнĕ е аманнă. Нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ, 14 орудийĕпе 26 пулеметне пĕтерсе тăкнă, 20 дзотне çĕмĕрнĕ. Хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тавăрас тесе тăрăшса, нимĕçсем темиçе хутчен ăнăçусăр контратакăсем тунă. Çав çапăçусенче вĕсем çĕнĕрен çухатусем тӳснĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн артиллери нимĕçсен 6 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Яковлев лейтенант ертсе пыракан 24 красноармеец пĕр паха высотана хӳтĕлесе противникăн темиçе атакине сирсе янă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тинĕс пехотин чаçĕсем нимĕçсен 3 танкне, 7 зенитнăй тата 11 полевой орудине, 2 радиостанцине пĕтерсе тăкнă. Противникăн пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Синявино районĕнче Ушинский юлташ ертсе пыракан подразделенисем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн разведка тăвакан группăсем, снайперсем тата артиллери противникăн 20 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 6 пулемет, 10 автомат, 20 пин патрон, радиостанци тата ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тытса илнĕ.

Ленинград фрончĕн тата Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем икĕ кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 28 самолетне персе ӳкернĕ, 3 самолетне сиенленĕ. Кунсăр пуçне, пирĕн зенитнăй артиллери Ленинград патне пымалли вырăнсенче противникăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Нимĕçсен 23-мĕш танковăй дивизийĕнчи 128-мĕш мотополкăн 5-мĕш ротинчи салтак Иоганнес Эбергардт çапла каласа панă: «Июль уйăхĕнче пирĕн ротăра 140 çын пулнă, халĕ унта 20-рен те ытла мар. Вĕсем—Бюхнер капитанпа пĕрле тарса хăтăлма пултарнисем. Хĕрлĕ Çар питех те хаяррăн çап... шши—вырăс снайперĕсем. Вĕсем пире пысăк çухатусем тӳстереççĕ».

* * *

Нимĕçсен 25-мĕш мотодивизийĕнчи 119-мĕш полкăн 11-мĕш ротинчи вилнĕ ефрейтор Шульц çумĕнче ун патне пĕлĕшĕ Георг Шнейдер çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Пирĕн патăрта вырăссем йышлăн çӳреççĕ. Вĕсем ялсенех вырçă, çиеспĕн пулса вĕсем пахчасенчен çĕрулми, купăста, пăрса тата ытти пахча-çимĕçсем те илсе-илсе тухаççĕ. Вĕсем час-часах хăйсен хуçисем патĕнчен тарса каяççĕ те вăрмансенче пытанса çӳреççĕ. Вĕсенчен кама та пулсан тытсан, нумай каласса тăмаççĕ—персе вĕлереççĕ».

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе Халăх Комиссариачĕсенчен пĕри 1942 çулти август уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухнă.

ВЦСПС тата Халăх Комиссариачĕ производство енĕпе тата ĕçтухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе государство планне тултарнă предприятисен шутĕнче Митюков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода палăртнă.

Квартал планне срок çитиччĕнех тултарнă

Черничкин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен Н-ски завод пĕтĕмĕшлĕ продукци туса кăларас енĕпе государствăн виççĕмĕш кварталти программине срок çитиччен çирĕм кун малтан тултарнă. Халĕ завод плантан ирттерсе фронта валли продукци тăвать.

Августри результатсем

Пĕтĕм Союзри Профессиллĕ Союзсен Центральнăй Совечĕ тата Электричество промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура Куйбышев ячĕпе тăракан трансформатор завочĕ тата Ленинградри Козицкий ячĕпе тăракан завод малти вырăнсене тухнă тесе йышăннă.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Н-ски заводран илсе Куйбышев ячĕпе тăракан трансформатор заводне (директорĕ Иванов юлташ) памалла тунă.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Ленинградри Козицкий ячĕпе тăракан заводăн (директорĕ Нестеров юлташ) аллинчех хăвармалла тунă.

Ăмăртура малти вырăна тухнă заводсене пĕрремĕш премисем параççĕ.

(ТАСС)

Çулталăк планне 115 процент тултарнă

ÇĔМĔРЛЕ, сентябрĕн 14-мĕш. (Телефонпа). Торфопредприяти çак уйăхра торф кăларас ĕçре пысăк çитĕнӳ турĕ. Сентябрĕн 11-мĕшĕ тĕлне предприятинче ĕçлекенсем çулталăк планĕнчен ирттерсе нумай торф кăларса хатĕрленĕ. Çапла вара çулталăк планне 115 процент тултарнă.

Торф кăларнă çĕрте ĕçлекен рабочисем социализмлă ăмăртăва хастарлăн хутшăнса ĕçлерĕç. Ăмăртура работницăсем Ланченкова, Толстова, Ордикова тата ыттисем те малта пыраççĕ. Вĕсем уйăх пуçланнăранпах кашни кун нормăна 2—3 хут ирттерсе тултараççĕ.

Х. ЛИСИН.

Пĕрремĕш вырăншăн

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Стрела» алăсталăх артелĕнче ĕçлекенсем, социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, август уйăхĕн планне 148,2 процент тултарчĕç. Куллен кирлĕ таварсем туса кăларас плана 552 процент пурнăçланă.

Ĕçре уйрăмăнах вĕренсем явакан бригада малта пырать. Вĕрен явакан В. Архипова плана 194 процент, О. Семенова 176 процент тултараççĕ. Инвалидсен группи пĕрлешӳллĕ мастерскойра ĕçлеме тытăннăранпа стахановецсем хăйсен кулленхи нормисене тата ытларах тултарса пыма пуçларĕç. Çĕнĕ мастерскойра ĕçлеме тытăннă хыççăн В. Архипова нормăна 252 процент, О. Семенова 203 процент тултараççĕ, И. Николаев, К. Прохорова та вĕсенчен юлмаççĕ.

Август уйăхĕнче артель республикăра иккĕмĕш вырăна тухнăччĕ, халĕ сентябрь уйăхĕнче татах та лайăхрах ĕçлесе, артель членĕсем пĕрремĕш вырăна тухассишĕн кĕрешеççĕ.

Г. ЕРИСОВ.

16 гвардеецăн вилĕмсĕр ĕçĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Сталинградшăн пыракан çапăçура 16 гвардеец ĕмĕрне манми чапа тухрĕç. Вĕсем фашистсен танкĕсене чарса лартнă, тăшмана каялла чакарнă.

Ку вăл «Ятсăр» высота районĕнче пулса иртнĕ. Кĕçĕн лейтенант Кочетков ертсе пыракан 16 гвардееца оборона йышăнма приказ панă. Çав высота ку таврари вырăнсенче уйрăмах паха пулса тăрать. Кунтан халăх пурăнакан питех те кирлĕ пункт патне çул уçăлать. Ĕнер кăна кунта хĕрӳллĕ çапăçусем пулса иртнĕ. Хĕвелтухăçнелле талпăнакан тăшман пирĕн боецсенчен тивĕçлине туянса, халĕ çĕнĕ атакăна хатĕрленнĕ, вăйсем пухнă. Тепĕр пĕр-икĕ сехетрен татах тăшманпа тĕл пуласси гвардеецсем лайăх пĕлнĕ. Çак саманта уçă курса вĕсем окопсем, таншейăсем чавнă, вĕсене хӳтĕленĕ.

Каç пулас умĕн итальянецсен пысăк отрячĕ высота патнелле ыткăннă. Вĕсем совет боецĕсенчен вунă хут ытларах пулнă. Анчах гвардеецсем шикленсе ӳкмен. Вĕсем тăшманăн салтакĕсене çывăха янă та кайран пĕр çунă пек пуля тăкма тытăннă. Пуринчен малтан кĕçĕн сержант Бурдов пулеметпа пеме тытăннă, ун хыççăн вара ефрейтор Гущин тата ытти боецсем те пеме пуçланă. Итальянец салтакĕсен пĕрремĕш ретне пулеметсенчен персе çулса пăрахнă. Çапăçу хирне тăшманăн 80 вилли выртса юлнă Унтан нимĕçсен автоматчикĕсем тапăнса пынă. Гвардеецсем вĕсене те тивĕçлипе кĕтсе илнĕ. Кун хыççăн тăшман высота патне 12 танк янă. Гвардеецсем машинăсене те пĕтерсе тăкма шут тытнă. Хăйсен вилекен командирне хӳтĕ вырăна хурса, виçĕ герой гранатăсен çыххисене илнĕ те, «Сывă пултăр пирĕн тăван çĕршыв!» тесе кăшкăрса, танксем айне ывтăннă. Гвардеец-геройсен чĕрисем тăшман танкĕсен брони ванчăкĕсем айĕнче тапма чарăннă.

Çапăçу пулса иртнĕ вырăна гвардеецсене пулăшма стрелковăй рота пырса çитсен, пирĕн боецсем тăвайккинче нимĕçсен 6 танкĕ çунса ларнине тата çакăнта хăйсен пуçĕсене хунă 15 гвардеецăн ӳчĕсене курнă. Вилекен кĕçĕн лейтенантран вĕсем гвардеецсен вилĕмсĕр ĕçĕ çинчен пĕлнĕ. Çак высота патĕнче тăван çĕршывшăн геройла çапăçса кĕçĕн сержантсем И. М. Касьянов, П. И. Бурдов, сержант М. А. Шуктамов, ефрейторсем И. И. Гущин, Н. В. Докучаев, красноармеецсем И. Н. Федосимов, Г. А. Унжаков, А. С. Двоеглазов, В. А. Меркурьев, В. А. Чирков, Н. М. Федотский, Г. Ф. Штефан, А. И. Жуковкин, Н. П. Степаненко, Н. А. Бурдин хăйсен пуçĕсене хунă.

Госпитальсенчи врачсен иккĕмĕш конференцийĕ

Иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнче госпитальсенчи врачсен пĕрремĕш научнăй конференцийĕ пулса иртнĕччĕ. Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Кăçалхи сентябрĕн 5—7-мĕшсенче госпитальсенчи врачсен иккĕмĕш научнăй конференцийĕ пулчĕ.

Конференцире «Госпитальсен çулталăк хушшинчи ĕçĕсем çинчен» доцент Стельмашонок юлташ доклад туса пачĕ. Паянхи куна госпитальсем аманнисене сыватас ĕçе лайăх туса пыракан заведенисем пулса тăраççĕ. Госпитальсенче пуринче те рентген, физиотерапи тата сиплекен физкультура кабинечĕсем, клиника лабораторийĕсем пур. Чылай госпитальсенче шăлсене сиплемелли кабинетсем тунă, пĕр госпитальре шăл лартакан мастерской уçнă, унта кирлĕ хатĕрсем йăлтах пур.

Аманнисене сиплес тĕлĕшпе госпитальсенче пур тĕрлĕ методсемпе те усă кураççĕ, йывăр аманнисене юн ярса сиплеççĕ, физиотерапи меточĕсемпе усă кураççĕ, сиплекен физкультура тутараççĕ, электричество çутипе сиплеççĕ. Соколов юлташ начальник пулса тăракан госпитальре—торфпа, Никитин юлташ начальник пулса ĕçлекен госпитальре—пылчăкпа сиплес методсемпе усă кураççĕ. Аманнисене госпитальсенче лайăх пăхаççĕ. Витамин туса хатĕрлекен лаборатори уçнă, унта тăвакан витамин чирлисене сыватас ĕçре нумай усă парать.

Çак çулталăк хушшинче врачсемпе сестрасен пĕлĕвĕсене ӳстерсе пынă. Врачсемпе сестрасем госпитальсенче ĕçленĕ вăхăтрах кĕске курссем урлă вĕренсе тухнă—хирургие, диэтăпа апат çитерес ĕçе, сиплемелли урăх мелсене те вĕреннĕ. Медицина сестрисен республикăри конференцине ирттернĕ. Вăрçăра аманнисене сиплеме вĕрентекен литературăпа врачсем кирек хăçан та усă курма пултарччăр тесе, госпитальсен центральнăй библиотекине организациленĕ, Чăвашгосиздат урлă çĕнĕрен ултă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Çак ĕçсене туса ирттерни госпитальсенче ĕçлекенсен пĕлĕвĕсене ӳстерме май пачĕ.

Аманнисене госпитальсенче сиплесси кăçалхи малтанхи çурçуллăхра иртнĕ çултинчен лайăхрах пулса пычĕ. Сурансене хăвăрт тата лайăх сипленĕ май аманнă боецсем, командирсемпе политработниксем нумайĕшĕ тепĕр хут строя тăма юсанса çитрĕç. Пĕр госпитальре сипленĕ аманнисенчен 90 процентĕ строя тăма юрăхлă пулнă.

Палладин, Полисов, Звеницкий, Никитин, Макаров юлташсем начальниксем пулса ĕçлекен госпитальсенче изобретательствăпа рационализаци аплă саралнă. Унта сиплес ĕçе лайăхрах туса пыма çĕнĕ аппаратсем шухăшласа кăларнă.

Пренире тухса калакансем—пĕрремĕш рангри военврач Романов, профессор В. А. Гусынин (Тутар АССР Наркомздравĕн госпиталĕсен главнăй хирургĕ), доцент Ф. М. Голуб (Мордва АССР Наркомздравĕн госпиталĕсен главнăй хирургĕ) тата ыттисем те аманнисене сиплес ĕçе госпитальсенче лайăх организациленине палăртрĕç, çак ĕçе лайăхлатмашкăн тата мĕн тума кирли çинче чарăнса тăчĕç, госпитальсен начальникĕсен вĕсене шанса панă заведенисен ĕçне татах та лайăхлатма кирлине кăтартса пачĕç.

Конференци 27 доклад итлесе сӳтсе яврĕ. Çав докладсене тĕрлĕ ыйтусем тăрăх, нумайĕшне опытлă врачсем туса пачĕç, хăшпĕр докладсене çамрăк врачсем турĕç.

Конференци ĕçĕсенчен çакă курăнчĕ: республикăри госпитальсенче наукăллă тĕпчев ĕçĕ ăнăçлăн аталанса пырать, врачсем Хĕрлĕ Çарăн аманнă воинĕсене сиплес ĕçе лайăхлатма пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшаççĕ. Конференцире пулнă врачсем госпитальсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç, аманнисене сыватас ĕçе лайăх туса пырса Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне вăйлатма пулăшмашкăн сăмах пачĕç.

Ют çĕршывсенче

Нью-Йоркри массăллă митинг иккĕмĕш фронт уçма ыйтать

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 10-мĕшĕнче Нью-Йоркра массăллă митинг пулса иртнĕ. Ăна Нью-Йоркри профсоюзсен 40 представителĕ пуçарнипе организациленĕ. Митингра иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтса, пĕр шухăш-кăмăллă резолюци йышăннă. Резолюцире çакна кăтартса панă: союзниксем уçма тивĕçлĕ иккĕмĕш фронт çуккипе усă курса, Гитлер хăйĕн мĕнпур войскисен 90 процентне совет фронтне янă. «Рузвельтпа Черчилль тата Молотов иккĕмĕш фронт çинчен килĕшӳ тунине эпир пĕтĕмĕшпех ырлатпăр тата çав килĕшĕве халех пурнăçа кĕртме чĕнетпĕр. Эпир кирек мĕнле жертвăсем тӳсе ирттерме те тата çĕнтерӳ тăвассишĕн тылпа çапăçу хирĕсенче мĕнпур вăя хурса ĕçлеме Рузвельта сăмах паратпăр». Резолюцире малалла çакна палăртнă: Нью-Йорк штатĕнчи Америкăн ĕçлев федерацийĕн центрĕ, 1.500 пинлĕ рабочисен представителĕсене пĕрлештерсе тăраканскер, хăйĕн нумаях пулмасть пулса иртнĕ сьездĕнче Европăри наступление пулăшма сăмах парса, пĕр шухăш-кăмăллăн резолюци йышăннă.

«Англипе Америкăри миллионшар рабочисем çакăн çинчен çине тăрсах калаççĕ»,—тенĕ резолюцире.

Латинла Америкăри рабочисен конфедерацийĕн председателĕ Ломбардо Толедано янă саламра çапла каланă: «Вăрçă вăраха кайсан, Латинла Америкăри халăхсем нумай асап курĕç, çакă вăл иккĕмĕш фронт пулмасан, çавăн пек килсе тухма та пултарать. Çĕнтерӳ тăвассишĕн иккĕмĕш фронт уçнă çĕрте пĕтĕмĕшпех пулăшу пама тата пĕрле ĕçлеме конфедераци хăй енчен сăмах парать», тенĕ.

Югославире лару-тăру çивĕчленсе кайнă

СТАМБУЛ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен килекен хыпарсенчен çакă курăнать: «Хорват королевстви» текенскерте пурăнакан халăх итальянецсемпе нимĕç захватчикĕсене тата вĕсен тарçисене — усташсене хирĕç массăллă выступленисем туни, Загребра выçă пăлханусем пулса иртни тата саботажла ĕçсем йышлăланни Павелича чрезвычайнăй мерăсене вăйлăлаттарнă. «Дейче цейтунг ин кроатиен» ятлă гитлерла хаçат çапла пĕлтерет: Загребра нумаях пулмасть тунă чрезвычайнăй положени сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Тригорьен пĕтĕм облаçне сарăлать.

Çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Тригорьере чрезвычайнăй положени тунăранпа çĕршер çынна арестленĕ ĕнтĕ. Партизансем активлăн кĕрешнине пула, сентябрĕн 4-мĕшĕнче Баново—Ярыня—Сухополье, Огулин—Сплит—Шибеник, Сплит—Синь, Огулин—Пласе—Григвиница чугунçулĕсем тăрăх çӳремен. «Дейче цейтунг ин кроатиен» хаçат çапла пĕлтерет: ытти çĕршывсене Вубнярок урлă таварсем ярассине те чарса лартнă. Яма тесе илнĕ таварсемпе багажсене вĕсен хуçисене каялла тавăрса параççĕ.

Çав хаçат пĕлтернĕ тăрăхах, сентябрĕн 2-мĕшĕнче Павелич «правительствин» ларăвĕ пулса иртнĕ, çав ларура юлашки вăхăтра ытла та анлăн сарăла пуçланă «хăрушă хыпарсемпе кĕрешес ыйтăва» сӳтсе-явнă. Оккупантсем хуçаланнипе тата Павеличăн политикипе тарăхни рядовой усташсем хушшинче те палăра пуçланă. Çĕршывра усташ отрячĕсенчен нумайĕшне салатса ярса вĕсем вырăнне оккупациллĕ войскăсем ярасси çинчен калакан хыпарсем çӳреççĕ. Халăх хăшпĕр Хорват облаçĕсене Германипе Италие пани çинчен пĕлнĕ. Правительство çĕршывран продовольствие ют çĕршывсене янипе уйрăмах хытă тарăхаççĕ. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Павелич «правительстви» çав лару хыççăн çакăн пек асăрхаттару пичетлесе кăларнă: «ӳпкелешекен тата хăратакан хыпарсем саракан çынсене пурне те законăн пĕтĕм çирĕплĕхĕпе айăпласа военно-полевой суда параççĕ. Упкелешекен тата тĕрлĕ хыпар... саракансем çинчен влаçăн органĕсене пĕлтермен çынсене те наказани памалла» тенĕ.

Белградра демонстрантсене персе пăрахни

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Халĕ çакă паллă пулса тăнă: англичансем Дьеппа рейд тунă хыççăн Белградра демонстраци пулса иртнĕ. Демонстрантсем хăйсем Англи çарĕ çине кăмăллăн пăхнине уççăнах кăтартса панă. Оккупантсен войскисем демонстрантсем çине пеме тытăннă. 50 çынна вĕлернĕ, 200 çынна ытла амантнă. Çав кунах Белградра нимĕçсем 2.000 çынна яхăн арестленĕ.

Финляндия выçă ларать

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндире апат-çимĕç çав тери пĕтсе çитнĕ пирки финсен «Арбетербладет» хаçачĕ тĕлĕнсе çапла çырать: «Финлянди столицинче пурăнакан çынсем çапах та ытлашши хытă тăрăхмаççĕ», тет. «Финн халăхĕ пысăк чăтăмлă. Халăх йывăрлăхсене пĕр япалапа кăна палăртать—çынсем питĕ ырханланаççĕ, çакна ĕнтĕ влаçсем те чарма пултараймаççĕ. Пирĕн сăмах ирĕклĕхĕ пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ пичетре пачах та урăхла сасăсем илтĕннĕ пулĕччĕç. Эпир çавна шансах тăратпăр»,—тесе палăртать хаçат.

«Каппан лехти» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Продовольствин çĕнĕ сезонĕ мĕнле пуласси пирки питĕ шикленмелле. Карточкăсем тăрăх илекен мĕнпур продуктсене снабжени органĕсем хатĕрлесе хума пултарас çукки халех уççăн курăнса тăрать. Апат-çимĕçе нормăламан продуктсемпе мĕнле те пулин лайăхлатасси çинчен калаçмалли те çук. Халăх пурăнакан пысăк пунктсене малалла снабжени парса тăрасси çавтери пысăк йывăрлăхсемпе çыхăнать. Нормăпа памалли продуктсене пурне те илес пулсан та, пирĕн пурĕ-пĕрех выçă условисенче пурăнма лекет». Фашистсен «Аян суунта» хаçачĕ çапла пĕлтерет: «Правительство кирек мĕнле мерăсем йышăнтăр, анчах пирĕн хулари халăха çăкăр те пулин памалла».

Индири лару-тăру

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Лондонра полици, чукмарсемпе тата куççуль юхтаракан газсемпе усă курса, демонстрацие салатса янă. 16 çынна амантнă.

Калькуттăра хăшпĕр çĕрте студентсен забастовки малалла пырать. Забастовка тăвакансем вĕренӳ заведенийĕсен пурлăхĕсене сиен кӳреççĕ тата вĕсем шкул управленийĕн çуртне вут тивертнĕ.

Багалпурти (Вихар провинцийĕ) центральнăй тĕрмерен 600 çын тарма хăтланнă. Тĕрме хуралĕпе пулса иртнĕ тытăçура тĕрмере ларнă 28 çынна вĕлернĕ тата 87 çынна амантнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ДЮССЕЛЬДОРФА ТАПĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 10-мĕшĕнче çĕрле Дюссельдорфа тапăннă чухне хула çине вут хыптаракан 100 пин бомба пăрахнă. Пĕтĕм Дюссельдорф хули вут-çулăм тинĕсĕ пулса тăнă. Рейн шывĕ тĕтĕмпе хупланнă. Çав тапăну пĕр сехет хушши те пыман. Бомбăсене çавтери хăвăрттăн пăрахнă пирки, сывлăшран тапăннинчен сыхланас ĕçсем пурте усăсăр пулнă.

Пĕлтерӳ

Паян, 1942-мĕш çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче, каçхине 7 сехет те 30 минутăра, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» VIII-мĕш сыпăкĕ тăрăх ушкăнлă консультаци пулать. Консультаци теми:

«Большевиксен партийĕ ют çĕршывсен вăрçăллă интервенцийĕпе граждан вăрçи тапхăрĕнче».

Консультант А. И. Воробьев юлташ.

ВКП(б) горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 300 Типографиа №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.